Района йěркеленěренпе 65 çул çитнě май

# Районта сывлăха сыхлас ěç çапла аталанса пынă

Иртнě ěмěрěн 20-мěш çулěсенче, пěтěм Раççейри пекех, пирěн республикăра та инфекци чирěсемпе, трахомăпа, туберкулезпа, малярипе, венерологи чирěсемпе чирлекенсем йышланса кайнă. Çав вăхăтрах сиплевпе профилактика учрежденийěсем тата медицина кадрěсем çитменни те палăрнă. Çакна курса тăрса Правительство 1928–1929 çулсенче сывлăха сыхлас ěç валли укçа-тенкě ытларах уйăрма тытăннă. Çěнě больницăсемпе амбулаторисем, фельдшер пункчěсем тăвасси ӳснě.

Муркаш больницине тăвасси (ун чухне Тутаркасси районě) пěтěмěшле 1931 çулхи октябрěн 1-мěшě тěлне вěçленнě темелле. Вак-тěвек ěçсем кăна юлнă. Çапла вара 1933 çулхи январьте больница ěçлеме тытăннă.

1935 çулхи январěнчен тытăнса Муркаш больницин заведующийě пулма Кашмаш ялěнче çуралнă А.П. Иштырганова çирěплетнě. Вăл 1915 çулта фельдшер ротин çар шкулне вěренсе пěтернě. 1959 çулччен кунта ěçлесе пенсие тухнă. Хыççăн больница заведующийěсем пулса Н.Н. Фадеева тата Е.И. Ефимова ěçленě.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулěсенче эвакуаци йěркипе Ленинградра пурăнакансене илсе килнě. Вěсем хушшинче А.И. Меклер та пулнă. Специальноçěпе – врач-терапевт. Больница заведующийěнче вăл 1945 çулччен тимленě, кайран унччензи вырăна таврăннă.

Вăрçă хыççăн больницăна В.М. Ольховский хирург ертсе пынă.

1948 çулта аптека çуртне туса лартнă. Ку ěçсене йěркелесе пыраканě тата ăна ертсе пыраканě 1975 çулччен Л.М. Михайлов пулнă.

1950-мěш çулсен пуçламăшěнче тěп врач Т.Н. Никитин пулнă. 1953–1959 çулсенче больницăна А.С. Буфатин ертсе пынă.

1960-мěш çулсен пуçламăшěнче больницăра котельнăй туса лартнă, хутса ăшăтмалли системăна хута янă. Ку вăхăтра больницăна Н.А. Аршуткин ертсе пынă.

Районти сывлăха сыхлас ěçе Гордеевсем пысăк тӳпе хывнă. Кусем вěсем Виталий Константинович хирург тата Людмила Константиновна педиатр пулнă. Çав çулсенчех район территорийěнче Мăн Сěнтěрте пултаруллă 2 тухтăр ěçлеме тытăннă. Кусем К.С. Степанов тата С.М. Ванюков.

1967–1968 çулсенче амбулаторин çěнě çуртне хута янă. Хыççăнхи çулсенче больницăна В.М. Веселов, Г.Г. Ефремов, П.А. Абрамов, В.А. Ильина ертсе пынă.

1975 çулхи майăн 29-мěшěнче районти тěп больницăн 3 хутлă çурчěн никěсне хывса хăварнă. Тěп врач ун чухне Ятман ялěнчи В.К. Филиппов пулнă.

1970-мěш çулсенче больницăна вырăнти кадрсем ěçлеме килме тытăннă. Кусем вěсем Н.А. Маркова, Н.Ф. Куликов, З.А. Андреева, Н.А. Кузьмина, Л.П. Огурцова, И.А. Воробьев, Л.Н. Андреев, Г.М. Огурцов. Г.М. Огурцова пěрремěш кунран тытăнсах тěп врач пулма çирěплетнě. 1980-мěш çулсен пуçламăшěнче районти тěп больницăна ěçлеме тухтăрсен çемье мăшăрěсем килнě: Даниловсем, Васильевсем, Кузнецовсем. 1982 çулта больницăна Басяевсем, педиатрсем, ěçлеме килнě. Больницăн тěп врачě В.В. Виноградов ертсе пынипе педиатри службине çěнě пусăма çěклеме, ачасем вилессине чакарма май килнě.

2002 çулхи январьтен тытăнса больница коллективне Чăваш Республикин тава тивěçлě врачě, ЧР Патшалăх Канашěн депутачě В.Г. Данилов ертсе пырать.

Хальхи условисене унччензипе танлаштарма çук. Чирлисене 22 специальноçпе йышăнаççě. Медицина пулăшăвěпе 86 врач, 275 вăтам медицина ěçченě тивěçтерет. 5 врач чи пысăк категори, 33 врач 1-мěш категори, 9 врач 2-мěш категори илнě. Медицина ěçченěсенчен чылайăшě районти тěп больницăн, район администрацийěн, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийěн Сывлăха сыхлас ěç тата социаллă аталану министерствисен Хисеп грамотисене, Чăваш Республикин тава тивěçлě врачěн ячěсене тивěçнě.

2003 çулхи январěн 10-мěшěнче тěп врач хушăвěпе районти тěп больницăн çамрăксен канашне туса хунă. Районти тěп больницăра 49 çамрăк специалист ěçлет. Çулленех çамрăксен канашě республикăри конкурссенче япăх мар кăтартусем тăват.

Кунпа пěрлех 2006 çулта сестрасен ěçěн канашне йěркеленě. Ăна тěп медицина сестри М.Ю. Шарапова ертсе пырать. Больницăра йěркеленě ветерансен канашě те сахал мар ěç туса ирттерет.

Пирěн врачсем Чăваш Республикинче кăна мар, унăн тулашěнче иртекен наукăпа практика конференцийěсене те активлă хутшăнаççě.

Республика конкурсěсенче уйрăм номинацисенче Ярапайкассинчи пěтěмěшле практика врачěн офисě 2-мěш, çав çулах Сыпайри фельдшерпа акушер пункчě 1-мěш вырăнсене çěнсе илме пултарчěç.

Юлашки çулсенче районти сиплевпе профилактика учрежденийěсене тěрлěрен хăнасемпе делегацисем сахал мар çитсе курчěç. Вěсем хушшинче ют çěр-шывсенчен килнисем те пур.

Районти тěп больницăра вăй хуракансем ěçлеме кăна мар, канма та пěлеççě, спортпа туслă. Пěрремěш çул мар ěнтě больница коллективě Муркаш ял тăрăхě ирттерекен спартакиадăн куçса çӳрекен кубокне çěнсе илет.

РФ Президенчě çěр-шыв аталанăвěн приоритетлă çул-йěрěсене палăртнăччě. Ку тěллевпе сывлăха сыхлас тěлěшěнчи наци проектне те туса хатěрленě. Вăл тěрлě енпе çыхăннă: пуçламăш медицина пулăшăвě парассине аталантарасси, ВИЧ-инфекци, В тата С гепатитсен профилактики, вěсене тупса палăртса сиплесси, хушма иммунизаци, хушма диспансеризаци, хěрарăмсене ача çуратиччен тата çуратнă тапхăрта медицина пулăшăвě парасси.

Юлашки çулсенче пурлăхпа техника бази самай пуянланчě. Васкавлă медицина пулăшăвěн автомобиль паркне тěпрен çěнетнě. Наци проекчěпе килěшӳллěн района хальхи медицина оборудованийě тата вакцинăсем 10 миллион тенкěлěхе яхăн кӳрсе килнě. Нумай пулмасть ялсенче пěтěмěшле практика врачěн 8 офисне уçнă.

Районти тěп больница тăнăç аталанса пырать. Эпир татса паракан тěп задачăсем вěсем çынсен пурнăç çулне вăрăмлатасси, çынсем вилнě тěслěхсене чакарасси, ачасем çуралассине ӳстересси, район çыннисен сывлăхне упрасси тата çирěплетсе пырасси.

**Г. ФЕДОТОВА,**
**районти тěп больницăн тěп врачěн çумě.**

Аукцион

## Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

**Форма торгов** - открытый аукцион.

**Наименование аукциона** - открытый аукцион на право заключения договора аренды земельного участка, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

**Основание проведения аукциона** – постановление Главы администрации Моргаушского района Чувашской Республики №28 от 29.01.2009 года

**Заказчик аукциона** - Администрация Моргаушского района Чувашской Республики.

**Аукцион проводит** - Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия Права»

Место нахождения: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Почтовый адрес: 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Номер контактного телефона (факса) (8352) 28 - 29 – 89, +7 905 029 12 03

Адрес электронной почты: garantiaprava@mail. ru

**Предмет аукциона:** право заключения договора аренды земельного участка, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

**Начальная (стартовая аукционная) цена:** начальная (стартовая аукционная) цена земельного участка определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

**Перечень земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики, выставленных на торги (аукцион):**

**Лот №1** - земельный участок с кадастровым номером 21:17:160302:113, категории «земли населенных пунктов», для целей жилищного строительства, местонахождение объекта: участок находиться примерно в 100 м. по направлению на юго-восток от ориентира жилое строение, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, село Моргауши, улица Парковая, дом 1, площадью 3564,00 кв.м.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) -** 46895,00 (сорок шесть тысяч восемьсот девяносто пять) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка.

**Срок, место и порядок предоставления аукционной документации.**

Документация об аукционе предоставляется по адресу:

Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, дом 35 «б».

Срок предоставления: с 11 февраля 2009 года по 16 марта 2009 года.

Порядок предоставления документации об аукционе: в электронном виде на основании заявления любого заинтересованного лица, поданного в письменной форме, в течение двух рабочих дней со дня получения соответствующего заявления.

Плата за предоставление документации об аукционе не взимается.

Заявки на участие в аукционе предоставляются по адресу:

Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б».

Сроки предоставления заявок: с 11 февраля 2009 года по 16 марта 2009 года.

**Обеспечение заявки на участие в аукционе.**

Размер обеспечения заявки на участие в аукционе составляет двадцать процентов начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка.

Банковские реквизиты для перечисления денежных средств обеспечения заявки на участие в аукционе: ***ООО «Юридическая фирма «Гарантия права»***

***ИНН/КПП 2130007402/213001001***

*р/с 40702810300960000813 в Чебоксарском филиале ОАО «Банк Москвы»*

*к/с 30101810200000000767*

***БИК 049706767***

Назначение платежа: залоговая сумма за участие в аукционе.

**Место, дата и время проведения аукциона.**

Аукцион проводится по адресу:

Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, 6.

Время проведения аукциона 17 марта 2009 года 09 часов 00 минут по московскому времени.

**Директор**
**ООО «Юридическая фирма «Гарантия Права»**
**Денисов А.И.**

Аса илӳ

# Йывăрлăхсем умěнче пуçа усман

Пурнăç пурăнасси уй урлă каçасси мар. Сахал мар йывăрлăхсемпе, пăтăрмахсемпе тěл пулса вěсене çěнтерме, тӳссе ирттерме тивет.

Виçě теçетке çул каяллахипе танлаштарсан, паян пачах урăх условисенче пурăнатпăр эпир. Анчах ун чухне те çынсем мал ěмěтпе пурăннă, малашнехи пурнăç çинчен шутласа, тăрăшса вăй хунă. Шанса панă тивěçсене яваплăха туйса пурнăçлани нумай ырă улшăнусен никěсě пулса тăрать. Çакна Муркаш ял администрацийěн ěç-хěлне тишкерни те лайăх çирěплетсе парать.

Хальхи вăхăтра ял администрацийěн территорине 5 ял кěрет пулсан, 30–35 çул каялла ун çинче 9 ял шутланнă: Муркаш, Çěньял Муркаш, Шаптак, Малиновка, Çурлатăри, Тойкилтě, Шаптак Турай, Хорнуй, Платкасси.

«Пěтěмпех çынсемшěн, вěсен пурнăçне лайăхлатассишěн». Çак тěллеве тěпе хурса тăрăшнă ун чухне ял Советěнче ěçлекенсем, депутатсемпе активистсем.

Н.Д. Ковалева Муркаш ял Советěнче 25 çул хушши тăрăшнă. Çав тапхăрта мěнле ěçленине вăл паянхи пекех лайăх астăвать. Чěрěк ěмěр хушшинче сахал мар улшăнусем пулнă. Паллах, йывăрлăхсем те пулман мар. Анчах та мал ěмěтпе пурăнни, килěштерсе ěçлени, пěрпěрне ăнланса, пулăшса пыни вěсене çěнтерсе пыма май панă.

Н.Д. Ковалева ял Совечěн секретарěнче, счетовод-кассирта вăй хунă. Питě тирпейлě, хăйěн ěçне лайăх пěлсе, çынсен нуши-ыйтăвěсене ăнланса пурнăçланă вăл хăйěн тивěçěсене. Çавăнпах пулě унăн халăх хушшинче авторитечě те пысăк пулнă, çынсем хисепленě ăна, паян та Нина Дмитриевнапа çынсем яланах канашлама тăрăшаççě.

Акă мěнле аса илет Н. Ковалева хăй ěçленě вăхăтсене: «Муркаш ял Совет ěçтăвкомěнче чěрěк ěмěр тимленě (1975–2000 çулсенче). Çак çулсенче мана пěрре те çăмăл пулман, шутламалликулянмалли тупăнсах тăнă. Ял Совет ěçтăвкомěн председателěсем, депутатсем вěçěмех улшăннă, пурнăç та малалла кайса пынă. Апла пулин те эпě кашнинпех пěр чěлхе тупса килěштерсе ěçленě, вěсене ялсенчи çынсен наказěсене пурнăçлама, территорисене тирпей-илем кěртме хавхалантарнă.

Çав çулсенче ял Совет ěçтăвкомěн тивěçěсем питě нумай пулнă. Мěншěн тесен вăл халăх умěнче анчах мар, çӳлте тăракан влаç умěнче те пысăк авторитетпа усă курнă. Территори пысăк пирки ěçлеме те çăмăл марччě: ялěсем пысăк, çыннисем нумай, ачасем çуралаççě. Çавна май пирěн тивěçсем те нумайланаççě.

А.П. Димитриев ял Совет председателě пулнă чухне эпě секретарьте тăрăшнă. Вăл вăхăтра вырăнти депутатсем 50-ăн пулнă. Сессисене икě эрнере пěрре ирттернě. Вěсене пурне те вăхăтра пухмалла, тивěçлě документсене, протоколсене те тěрěс, çийěнчех йěркелесе пымалла. Сăмах май каласан, депутатсем пурте активлăччě, халăх ахальтен мар шаннă вěсене.

Хам ěçленě тапхăрта депутатсене наказсене пурнăçлама яланах пулăшнă. Уйрăмах ялсене илемлетсе тирпейлес, çынсен пурнăçне лайăхлатас тěлěшпе. Вăл шута ача-пăча площадкисене тирпей-илем кěртни, çăлсене тасатни, çырмасемпе юхан шывсем урлă каçса çӳреме пěчěк кěперсем туни, йывăçсем лартни т. ыт. те кěреççě.

Сăмах май каласан, Муркаш ял Совет ěçтăвкомě тăрăшнипех Муркашра парк йěркеленěччě, чăрăшсем те лартрăмăр.

Калас пулать, эпě ял Совет ěçтăвкомěнче тимленě вăхăтра интереслě самантсем те сахал мар пулнă. 1982 çулхи декабрь уйăхěнче ял Советне пěр çамрăк мăшăр çырăнма заявлени пама килчě. Пěрремěш кунěнче ятарлă бланксем пулмарěç, тепěр кунне шăпах вěсем килсен электричество сӳнсе ларчě. Паллах, пěр вăхăт электричество парасса кěтрěмěр. Мěн тăвăн, çак лару-тăруран епле те пулин тухмаллах. Çынсем кěтеççě, хумханаççě. Ирěксěрех хăйă чěртме тиврě (ял Совечě малтан Чапаев урамěнче пулнă чухне çурта вутă хутса ăшăтнă). Пěтěм документсене йěркелесе çитерсен электричество та пулчě. Мěн тăвăн, ун чухне урăх вăхăт, урăх условисем пулнă.

Çакă та асрах. Налук пуçтарма ялсем тăрăх кайсан пěррехинче пире питě хытă хăваларěç. Вěсем пирěнне укçа туртса илме тěллев лартнă пулнă.

Çав тапхăрта ял хуçалăхě те вăйлă аталаннă. Ял Совет ěçтăвкомěн сессийěсенче ял хуçалăх производствипе çыхăннă ыйтусене яланах пăхса тухнă, кооперацин, ытти организацисен ěçне тишкерсех тăнă. Сессисен ěçне Е.А. Андреев, И.Т. Вольнов, А.С. Степанов активлă хутшăнатчěç».

Нина Дмитриевнан аса илмелли сахал мар. Вăл вăхăтра нотариус ěçěсене те хăйсемех пурнăçланă, ватă çынсем патне кěрсе халал хучěсем йěркелесе панă. Тăхăр яла çитсе 5 тěрлě налук пухасси те вěсен тивěçех пулнă. Вěсен шутěнче: çěр, транспорт налукěсем, гаражсемпе тата сарайсемпе усă курнин налукě, обязательнăй страховани, самообложени укçисем. Вěсене кашни çын тӳрех тӳлеймест. Апла пулин те пěтěм суммăна тăрăшса пěр пус юлмиччен пухнă.

ЗАГС тивěçěсем те ун чухне ял Совечě çинчех пулнă. Çамрăк мăшăрсене савăнăçлă лару-тăрура çырăнтарма, çуралнă ачасене ят хума ятарлă кěпе-тумтир те пулнă.

Ӳсен-тăран, выльăхчěрлěх продукчěсене сутăн илесси те вěсен тивěçех пулнă. Ялсем тăрăх çӳресе аш-какай, сěт, çăм, çěр улми пухнă. Ял Совет ěçтăвкомěн ěçě курăнмасть пулин те, тивěçěсем ытлашшипех пулнă. Хăй вăхăтěнче талонсем те валеçнě, нушаланакансене пулăшнă, çынсене хăйсен ыйтăвěсемпе йышăннă т. ыт. те.

А.П. Димитриев хыççăн Н. Ковалева П.Н. Петровскийпе, В.В. Оньковпа, В.И. Семеновпа та ěçленě. Ун чухне вăл счетовод-кассир пулнă. Нина Дмитриевнан пěтěмěшле ěç стажě 40 çул ытла. Çак тапхăрта вăл район аталанăвěн историне хăйěн тӳпине тивěçлипех хывнă теме пулать. Тахçанах тивěçлě канура пулин те, вăл паян та пурнăçпа тан пырать. Ыр кăмăллăх, тěрěслěх, ěçе юратни, çынсене пулăшма тăрăшни уншăн паян та чи малти вырăнта.

Пěр сăмахпа каласан, паянхи çамрăксен камран вěренмелли пур, ырă тěслěхсем сахал мар, кăмăл кăна пултăр.

**А. ЧЕРНОВА.**